23-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 АПРЕЛЬ 3 ЫТЛАРИКУН 63(6814) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

### *Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА*
### *Фронт штабĕн начальникне Генерал-лейтенанта ИВАНОВА*

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, БАЛАТОН кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла наступлени туса пырса, паян, апрелĕн 2-мĕшĕнче, Болгари çарĕсемпе пĕрле çапăçса, Венгрин нефть промышленноçĕн центрне НАДЬКАНИЖА хулине — çулсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне — туртса илнĕ.

НАДЬКАНИЖА хулине туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ШАРОХИН генерал-лейтенантăн, Болгари çарĕн генерал-лейтенанчĕн СТОЙЧЕВАН, ВЕРХОЛОВИЧ генерал-майорăн, БЛАГОДАТОВ генерал-майорăн, КРАВЦОВ генерал-майорăн, АРТЮШЕНКО генерал-майорăн, ТОШЕВ генерал-майорăн, ВЕЛИЧКО генерал-майорăн, БУНЯШИН генерал-майорăн, ГОРШКОВ генерал-лейтенантăн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорăн, ХАДЖИ ИВАНОВ полковникăн, ЩЕРБЕНКО полковникăн, КИРЬЯН полковникăн, САВЧЕНКО полковникăн, ТАРАЛЕШКОВ полковникăн, ХУБЕНОВ полковникăн, ПЕТРОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ВОЗНЮКАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЙДАН, ПЕТРОВ полковникăн, МАЛХОВ полковникăн, ГОЦАК полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн, ГАВРИЛЕНКО полковникăн, ПОПОВ полковникăн, ШПЕК подполковникăн, КОРОВИН подполковникăн, НЕЧАЕВ подполковникăн, КОЛМОГОРОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; ПШЕНЕЦКИЙ полковникăн, КАТИЛОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦАН, авиаци генерал-майорĕн КОРСАКОВАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ТИШЕНКАН, ДЕМЕНТЬЕВ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, НЕДОСЕКИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГОЛДОВИЧАН, ПАРОВ полковникăн, ЗАГРЕБИН полковникăн, РЫБАЛЬСКИЙ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, СТАРОЛЕПОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, НАДЬКАНИЖА хулине туртса илесшĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратăс.

Паян, апрелĕн 2-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, çав шутрах Болгарин СТОЙЧЕВ генерал-лейтенант ертсе пыракан çарне те, НАДЬКАНИЖА хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, НАДЬКАНИЖА хулине туртса илесшĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, пите чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ника ма пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1945 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕ. № 327.

## *Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ тата Польша Республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхĕ Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин патне янă телеграмма*

*МУСКАВ, КРЕМЛЬ*

Хĕрлĕ Çар Висла шывĕн вăррине тата поляксен Гданьскпа Гдыня порчĕсене ирĕке кăларнине пĕтĕм Польша халăхĕ хĕрӳллĕн саламлать. Эсир ертсе пыракан Хĕрлĕ Çар Польша валли тинĕç хĕррине анлăн тухма май туса панине тата Польшăн авалхи Гданьск портне çĕнĕрен Польша çумне хутшăнтарнине Польша халăхĕ нихçан та манас çук.

Союзлă Хĕрлĕ Çар—ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар сывă пултăр!

БЕРУТ.
ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.

Варшава, 1945 çулхи мартăн 31-мĕшĕ.

## СССР Совнаркомĕнче

### Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене 1945 çулхи февраль уйăхĕнче юсамалли плана пурнăçлас тĕлĕшпе облаçсемпе крайсем тата республикăсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем çинчен

СССР Совнаркомĕ тракторсемпе ялхуçалăх машинисене февраль уйăхĕнче юсамалли плана пурнăçлассишĕн облаçсемпе крайсем тата республикăсем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă, социализмлă ăмăртура çак облаçсемпе республикăсем мала тухнă тесе шутласа, çапла йышăннă:

1. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене тата укçан тӳлемелли премисене çаксене парас:

а) Кĕркунехипе хĕллехи вăхăтра юсамалли плана срокчен пурнăçланăшăн—

Белорусси ССР-не,

Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçне,

Украина ССР-ĕнчи Днепропетровск облаçне;

б) Февраль уйăхĕнче юсамалли плана пурнăçланăшăн—

Иваново облаçне,

Брянск облаçне.

2. Тракторсене юсамалли плана пурнăçланă çак облаçсемпе республикăсем лайăх ĕçленине палăртас: Азербайджан ССР-ĕ, Армени ССР-ĕ, Грузи ССР-ĕ, Дагестан АССР-ĕ, Украина ССР-ĕнчи Кировоград, Николаев, Одесса тата Ворошиловград облаçĕсем, Казах ССР-ĕнчи Караганда облаçĕ, Таджик ССР-ĕнчи Ленинабад облаçĕ, Киргиз ССР-ĕ, Карел-Финн ССР-ĕ, Архангельск, Великие Луки, Вологда, Горький, Киров, Кострома, Ленинград, Свердловск, Челябинск тата Ярославль облаçĕсем, Коми АССР-ĕ, Чăваш АССР-ĕ тата Якут АССР-ĕ.

## Совет Союзĕ тăрăх

### ФРОНТОВИКСЕН АЧИСЕМ ВАЛЛИ УÇНĂ САНАТОРИСЕМПЕ ҪАНУ ÇУРЧĔСЕМ

Молотов облаçĕнчи çамрăксем фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда 3 миллион тенкĕ укçа пухса хывнă. Çав укçапа Урал тăвĕсен илемлĕ вырăнĕсенче икĕ санатори тата темиçе кану çуртĕ уçнă.

Çав фонд пĕрмаях ӳссе пырать. Çак кунсенче вĕçленнĕ вунăкунлăх хушшинче татах пĕр миллион тенкĕ укçа пухнă. Краснокамск тата Тури Чусовой районĕсенчи çамрăксем 142 тонна апат-çимĕç пухнă. Губаха çамрăкĕсем нумаях пулмасть фронтовиксен ачисем валли çĕнĕ санатори уçнă. (ТАСС).

### РАДИО ЮРАТАКАНСЕН МУСКАВРИ КАНАШЛĂВĔ

СССР Осоавиахимĕн Центральный Совечĕнче А. С. Попов радио шухăшласа кăларнăранпа 50 çул тултарнă ятпа Мускавра радио юратакансен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Май уйăхĕнче «Осоавиахимăн чи лайăх радисчĕ» ятне илес тĕлĕшпе ăмăрту пулса иртмелле. Политехника музейĕнче уçăлакан выставкăра радио юратакансен ĕçне тата совет радиотехникине аталантарас ĕçре радио юратакансем мĕнле вырăн йышăнса тăнине кăтартса паракан темиçе стэнд тумалла. (ТАСС).

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### МАРТĂН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем КИСТЖИНЬ (КЮСТРИН) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен ВАРТА шывĕпе ОДЕР шывĕ хушшинчи района хӳтĕлекен самаях пысăк гарнизонне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнă, 3.170 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ тата 54 хир туппи, 150 пулемет тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 3.000 виллине çити выртса юлнă.

ГЛОГАУ хулипе БРЕСЛАУ хули районĕсенче пирĕн çарсем нимĕç çарĕсен хупăрласа илнĕ ушкăнĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем мартăн 31-мĕшĕнче РАТИБОР хулипе БИСКАУ хулине—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен ОДЕР шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—БРАТЫ, ТЮРМИТЦ, ХОХКРЕТШАМ, КАТШЕР, ТРЭМ, ЗАУДИЦ, ВЕЙЕНДОРФ, ХОЕНБИРКЕН, ПШУВ, РЫДУЛЬТАУ ялĕсем.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, НИТРА хулине туртса илнĕ тата, ВАГ шывĕ урлă каçса, ГАЛАНТА хулине—БРАТИСЛАВА хули патне пымалли вырăнсенчи çулсен паха узелне—çапăçса туртса илнĕ. Мартăн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КЕПЕШД, ШАЛЬЯ, ДЯКОВЦЕ, ПЕРЕД, ЖИГАРД, ГОРНИ САЛИБИ МОСТОВА, КЕРТЬ, ГУТА, ЗЕМЯНСКА-ОЛЧА, ТАНИ ятлă пысăк ялсем тата ШАЛЬЯ, ПЕРЕД, ЖИГАРД, НЕДЕД чугун çул станцийĕсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, ДУНАЙ шывĕн кăнтăр хĕррипе наступлени туса пырса, ДУНАСЕГ, КУНСИГЕТ, МОШОНСЕНТМИКЛОШ, БЕ-ШАРКАНИ, МАГЛОЦА ялĕсене туртса илнĕ. Мартăн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, мартăн 31-мĕшĕнче ВАШВАР, КЕРМЕНД, СЕНТГОТТАРД хулисене—нимĕçсен РАБА шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене — туртса илнĕ тата БАЛАТОН кӳллинчен кăнтăртарахра Болгари çарĕсен чăçĕсем ЧУРГО хулине çапăçса йышăннă. Наступлени туса пырса, фронт çарĕсем мартăн 31-мĕшĕнче Венгри çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ШЮТТЕР, ХИДЕГШЕГ, КОПХАЗА (ШОПРОН хулинчен 5 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), НАДЬЦЕНК, УНД, НАРАЙ, КАНДОРФА, ЕРИСЕНТПЕТЕР, ЗАЛАБАКША, НОВО ШАРМЕЛЛЕК ятлă пысăк ялсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Австри çĕрĕнче, ВИНЕР НОЙШТАДТ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, фронт çарĕсем халăх пурăнакан 70 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ДОЙЧ КРОНЦ, НЕКЕНМАРК, ЛАКЕНБАХ, РИЦИНГ, ЧУРНДОРФ, ВИСМА, КИРХШЛАГ, РЕХНИТЦ ятлă пысăк ялсем. Мартăн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 8.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче венгерсен 3-мĕш армейски корпусĕн командирĕ генерал-лейтенант АКТОЛЕЙКО-БЕЙЛА.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 30-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ӳкернĕ.

### АПРЕЛĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, нумайччен хупăрласа тăрса вăйлăн çапăçнă хыççăн, саварса илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ, апрелĕн 1-мĕшĕнче ГЛОГАУ (ГЛОГУВ) хулипе крепоçне—нимĕçсен ОДЕР шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин хăватлă узелне—туртса илнĕ.

ГЛОГАУ хулишĕн пынă çапăçусенче фронт çарĕсем 8.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалпа ытти çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, апрелĕн 1-мĕшĕнче ТРНАВА, ГЛОГОВЕЦ, СЕНЕЦ хулисене—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене, БРАТИСЛАВА патне пымалли вырăнсене хӳтĕлекенскерсене, туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, Чехословаки çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 160 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВИЧАЦИ-ОПАТОВЦЕ, АШАКЕРТЬ, АЛЕКШИНЦЕ, УЙЛАК, БАБ, ШИПТАВА, ВЕЛИКИЙ МАЧАД, ВЕЛИКИЙ ДУССЕК, МАЛЫЙ ДИОСЕК, ВЕЛИКИЙ ФЕДИМЕШ, ФАРКАШИН, ЦИФЕР, БАХОНЬ, ЕЛКА, НАРАШД, АЛИШТАЛЬ, ВЕЛИКИЙ МЕДЕР, ПАТАШ, МЕДВЕ ятлă пысăк ялсем тата ЛОВАШОВЦЕ, ЗБЕГИ, АЛЕКШИНЦЕ, ВЕЛИКИЙ ДИОСЕК, ГОРНИ-ШТАЛЬ, ЕКЕЧ, ВЕЛИКИЙ МЕДЕР чугун çул станцийĕсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, ДУНАЙ шывĕн кăнтăр хĕррипе наступлени туса пырса, ВЕНГРИ çĕрĕнче АШВАНЬ, ЛИПОТ, ДУНАРЕМЕТЕ, ХОДЕРВАР, ХОРВАТКИМЛЕ, ЛЕБЕНИ, МОШОНСЕНТПЕТЕР ялĕсене тата ЛЕБЕНИ, ХОРВАТКИМЛЕ, ХАНШАЧ, МОНШОНСЕНСПЕТЕР чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Мартăн 31-мĕшĕпе апрелĕн 1-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 6.150 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, апрелĕн 1-мĕшĕнче ШОПРОН хулине—пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен ВЕНА патне пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне—туртса илнĕ, çавăн пекех тата Венгри çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ФОРТЕРАКОШ, АГФАЛЬВА, БРЕНГБЕРГ, ВАШКЕРЕСТЕШ, ПАРНОАПАТИ, СЕНТПЕТЕРФА, ПИНКОМИНОСЕНТ ятлă пысăк ялсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Австри çĕрĕнче, ВИНЕР НОЙШТАД хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра фронт çарĕсем халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — РУСТ, ТРАУЕРСДОРФ, ЗИГЕНДОРФ, ДРАСБУРГ, МАТЕРСБУРГ, ФОДХТЕНАУ, БРОМБЕРГ, КИРХАУ ятлă пысăк ялсем. БАЛАТОН кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем, Болгари çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КИШКОМАРОМ, ГАЛАМБОК, ИХАРОШВЕРЕНЬ, ИХАРОШ, ЕГЕР-АРАЧА, УЮДВАР, ШАНЦ, БАГОЛА ШАНЦ, ЛИСО, ШУРД, ДЬЕКЕ-НЬЕШ ятлă пысăк ялсем тата КОМАРВАРОШ, СЕНТ-ЯКОВ чугун çул станцийĕсем. Мартăн 31-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 26.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—127, танксем —17, хир тупписем—291, пулеметсем —1.547, автомашинăсем—1.390, паровозсем—27, чугун çул вагонĕсем—1.516. ШОПРОН хулинче пирĕн çарсем венгерсен 2-мĕш армийĕн командующийĕ пулнă генерал-полковника ВЕРЕШ ЛАЙОША, нимĕçсем тĕрмене хупнăскере, ирĕке кăларнă. Халĕ ăна Венгрин Вăхăтлăх Правительстви аллине панă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 31-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 46 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем Глюгау хулипе крепоçне—нимĕçсен Одер шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин хăватлă узелне—туртса илнĕ. Тăшманăн ку хулара хирĕç тăрса çапăçма тăвата тĕп узел пулнă—Гинденбург казармисем, Людендорф казармисем, стадион районĕ тата кивĕ крепость районĕ. Çав хирĕç тăмалли узелсене пурне те нимĕçсем пĕр-пĕринпе çĕр айĕнчи çулсемпе пĕрлештернĕ. Хулана нимĕçсен урамсенче çапăçма ятарласа хатĕрленĕ чи лайăх чăçĕсем хӳтĕленĕ. Пирĕн çарсем Глогау хулине саварса илнĕ хыççăн кунран-кунах тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Советсен штурмлакан ушкăнĕсем. нимĕçсене укрепленисенчен çапаçапа кăларса, çине тăрсах малалла куçса пынă. Людендорф казармисемшĕн уйрăмах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пирĕн подразделенисем çав казармăсен районне çурçĕр енчен, хĕвеланăç енчен тата кăнтăр енчен саварса илнĕ. Çав вăхăтра артиллеристсемпе минометчиксем казармăн аялти хутĕнчи чӳречисене тата подвалсене пеме тытăннă, унта нимĕçсен персе тăмалли вырăнĕсем нумай пулнă. Çапла персе хӳтĕлесе тăнă хушăра совет пехотинецĕсемпе саперĕсем штурм пуçласа янă. Пилĕк казармине часах туртса илнĕ. Юлашки улттăмĕш казарма гарнизонĕ çаплах хирĕç тăма пăрахман, вара ăна сывлăша сиктерсе янă. Пирĕн ытти подразделенисем, тата вăйлăрах пырса çапса, стадион районне, Гинденбург казармисене тата чугун çул узелне нимĕçсенчен тасатнă. Паян пирĕн çарсем кивĕ хулан крепоçне йышăннă, çапла вара, хупăрласа илнĕ нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление малалла вăйлатса пынă. Совет чăçĕсем малалла кайнă май тĕл пулакан йышлă пĕчĕкрех юханшывсем, шурлăхсем урлă каçа-каçа 25 километр малалла кайнă. Паян пирĕн çарсем пилĕк чугун çул узелĕ пулса тăракан Трнава хулине туртса илнĕ. Ку районра тăшман танкĕсемпе пехотин ушкăнĕ пирĕн наступлени туса пыракан подразделенисене флангран пырса çапма хăтланнă. Вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсен 17 танкне тата икĕ батальон пехотине пĕтерсе тăкнă, вара тăшмана сапаласа янă. Новы-Замки хулипе Братислава хули хушшинчи çул тăрăх наступлени туса пыракан совет чăçĕсем гитлеровецсене Сенец хулинчен сирпĕтсе кăларнă. Ку хула Братиславăран 20 километрта ларать. Фронт çарĕсем, тăшмантан çав тери хăвăрт малалла иртсе кайса, нимĕç çарĕсен ушкăнне Малый Дунай шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă та халĕ çав ушкăна пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ.

Чехословаки хулисемпе ялĕсенчи халăх Хĕрлĕ Çар чăçĕсене çав тери савăнса кĕтсе илет. Çĕнтерӳллĕ совет çарĕсене, Чехословаки халăхĕсене фашистсен пусмăрĕнчен ирĕке кăлараканскерсене, хисеплесе митингсемпе демонстрацисем пула-пула иртеççĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă. Ферта (Нойзидлер-Зее) кӳллипе Хĕвелтухăç Альп тăвĕсен юпписем хушшипе малалла куçса пыракан совет чăçĕсем Шопрон хулине — çулйĕрсен пысăк узелне тата Австри столици пулса тăракан Вена хули патне пымалли вырăнсенчи вăйлă çирĕплетнĕ пункта—туртса илнĕ. Тăшман, совет чăçĕсем наступлени туса пынине чарма хăтланса, кунти çапăçусене Венăри офицер шкулĕн тата нимĕçсен запасри дивизийĕн çĕнĕ вăйĕсене кĕртекĕртсе ярать. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем нумай хĕçпăшал тата боеприпаспа çар пурлăхĕн склачĕсене пăрахса хăвараççĕ.

Балатон кӳллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Надьканижа хули патне пымалли вырăнсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Надьканижа патĕнчи нефть районне хӳтĕлеме малтанах туса хунă оборона тăрăхĕпе усă курса, тăшман хытă хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем тăшман траншейисен темиçе линине татса кĕнĕ те, малалла куçса пырса, Надьканижа хулинчен 4 километр çурçĕртерехре ларакан Уюдвар ятлă тĕреклетнĕ пункта тата Надьканижа хулинчен 2 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Шанц ятлă тĕреклетнĕ пункта туртса илнĕ. Кунти çапăçусенче тăшмана йывăр çухатусем кӳреççĕ. Фронт çарĕсем тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пинĕ-пинĕпе хуралласа тыла ăсатаççĕ.

## *Мирпе хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие Украинăпа Белорусси ССР-ĕсем хутшăнасси çинчен*

Юлашки кунсенче ют çĕршывсенчи хаçатсенче мирпе хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие Украинăпа Белорусси республикисем хутшăнасси çинчен каланине пичетлесе кăларнă. Ку ыйту тăрăх ТАСС аллинче авторитетлă учрежденирен илнĕ çакăн пек информаци пур.

Крымри конференци вăхăтĕнче Совет Правительствин представителĕсем мирпе хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие Украинăпа Белорусси республикисене малтанхи членсен шутне кĕртсе хутшăнтарасси çинчен ыйту лартнă. Украинăпа Белорусси хăйсен халăхĕсен хисепне, политика тĕлĕшĕнчен мĕнле вырăн йышăнса тăнине тата гитлерла Германие аркатса тăкас ĕçе мĕн чухлĕ вăй хунине шута илсен, çав пĕтĕм тĕнчери организацие тăвакан çĕршывсен шутне кĕртнĕ хăшпĕр государствăсенчен ирттереççĕ. Çавна шута илсе, Совет представителĕсем çав икĕ тĕп Совет республикисене член-учредитель шутне кĕртсе чĕнме сĕннĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани Правительствисен представителĕсем çак сĕнӳпе килĕшнĕ.

Çавна пула вара Крымри конференцире çапла килĕшсе татăлнă: Сан-Францискo хулинче пулса иртмелли конференцире Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕсем Украинăпа Белорусси республикисене асăннă пĕтĕм тĕнчери организацие член-учредитель шутне кĕртсе чĕнме сĕннине йышăнмалла, тенĕ. Çакăн хыççăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсем США-на Ассамблейăра сасăсем хушса пама ыйтнине Совет Союзĕ йышăнтăр тесе ыйтнă.

Çакăн çине ответлесе, Совет Союзĕн представителĕсем США сĕннипе килĕшни çинчен пĕлтернĕ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Ассамблейăра виçĕ сасă тăрăн пулма пултарать, тенĕ.

Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Великобритани представителĕсем те Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин çак сĕнĕвне хирĕç пулманни çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденпа тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальпе наградăласси çинчен

*(Юлашки. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 54-мĕш номерĕнче).*

**ШУПАШКАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ**

Пилĕк ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене «АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА II-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

3. Мария Прокопьевна Прокопьевăна — Кӳкеç ял Советĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

4. Анна Петровна Петровăна—Кӳкеç ял Советĕнчи «Трактор» колхозри колхозницăна.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи мартăн 6-мĕшĕ.

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

### Нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденпа тата „Ача амăшĕн медалĕ" ятлă медальпе наградăласси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе çаксене наградăлас:

**ҪАНАШ ХУЛИ ТĂРĂХ**

Тăхăр ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене «АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛА I-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Мария Осиповна Матвеевăна—килхуçи хĕрарăмне.

Сакăр ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене «АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛА II-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Серафима Васильевна Журавлевăна—килхуçи хĕрарăмне.

Улттă ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене «АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА I-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Александра Кирилловна Капитоновăна—килхуçи хĕрарăмне.

2. Анна Ивановна Пашировăна—килхуçи хĕрарăмне.

3. Васса Трофимовна Перфиловăна—килхуçи хĕрарăмне.

4. Нягиме Ахмедзяновна Салахутдиновăна—килхуçи хĕрарăмне.

Пилĕк ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене «АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА II-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Ольга Федоровна Абрамовăна—килхуçи хĕрарăмне.

2. Камила Ханялютдиновна Камарутдиновăна—килхуçи хĕрарăмне.

3. Марина Григорьевна Львовăна—апат-çимĕç магазинĕнчи служащие.

4. Татьяна Еремеевна Матанинăна—магазинри служащие.

5. Анастасия Федоровна Пастуховăна—килхуçи хĕрарăмне.

6. Лукерия Степановна Ситкинăна—килхуçи хĕрарăмне.

7. Мария Семеновна Сухаревăна—килхуçи хĕрарăмне.

8. Александра Федоровна Слесаревăна—килхуçи хĕрарăмне.

9. Римма Логиновна Финогеевăна—столовăйри работницăна.

10. Елена Фроловна Шарафутдиновăна—килхуçи хĕрарăмне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи мартăн 22-мĕшĕ.

### ЛЕНИНГРАД СЫВĂХĔНЧИ ВОКЗАЛСЕНЕ ТУНИ

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Ленинград сывăхĕнчи станцисен çуртсене пурне те тенĕ пекех аркатса тăкнă. Вĕсенчен пĕр пайне халĕ юсаççĕ, тепĕр пайне çĕнĕрен тăваççĕ. Пушкин хулинчи вокзала тума пуçланă. Любань хулинчи вокзалăн стенисене хума пуçланă. Ăна ĕлĕкхи пекех тума шутлаççĕ. Саблинра аркатса тăкнă йывăç çурт вырăнне чул çурт тума хатĕрленеççĕ. (ТАСС).

### СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ВИÇĔ ТĔСПЕ ӲКЕРНĔ ПĔРРЕМĔШ ФИЛЬМ

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинематографи комитечĕ Совет Союзĕнче пĕрремĕш хут виçĕ тĕспе ӳкернĕ «Иван Никулин — вырăс матросĕ» ятлă фильма пăхса тухнă. Ку таранччен виçĕ тĕслĕ кинокартинăсене Америкăра кăна ӳкернĕ. Картина ӳкермелли пĕтĕм оборудование Совет Союзĕнчи заводсенче тунă. (ТАСС).

### Чăваш республики 25 çул тултарас умĕн

### *Республика 25 çул тултарнă тĕле колхозсем çĕнĕ çуртăйĕрсем тăваççĕ*

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Республикăри ял хуçалăх работникĕсем чĕнсе каланине районри кашни колхозрах сўтсе-яваççĕ. Колхозсем, Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Тăрăн ял Советне кĕрекен колхозсем пурте çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Юлашки кунсенче пулса иртнĕ тĕрĕслўре палăртнă çитменлĕхсене вĕсем кĕске вăхăтрах пĕтерчĕç.

Нумай колхозсем Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле çĕнĕ çуртăйĕрсем туса лартма шутлаççĕ. «МОПР» колхоз пăрусем тата сыснасем валли çĕнĕ витесем тăвать. Вĕсене тума 200 кубометр йывăç кирлĕ, халĕ 100 кубометр ытла касса хатĕрленĕ. «Новая жизнь» колхоз членĕсем правлени канцелярине çĕнĕрен тума йышăннă, çавна валли 100 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз пĕрлешўллĕ мунча тата лаша вити тума йышăннă. Сыбайкассинчи «Труд» колхоз 100 лаша валли çĕнĕ вите тăвать. Кашни колхозрах Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле çĕнĕ çуртăйĕрсем туса лартас тесе тăрăшаççĕ.

**И. ГРИГОРЬЕВ.**

### *Гидроэлектростанци тăваççĕ*

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Пищевик» колхозăн Сĕнтĕр шывĕ çинче икĕ чуллă арман пур. Колхозниксен пухăвĕ йышăннă тăрăх, çак шыв арманĕ вырăнне Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле шывпа ĕçлекен электростанци туса çитерме йышăннă. Шыв вăйĕпе туллин усă курас майпа, çак электростанци тырă авăртмалли армана, çăм тапакан машинăна, авăн çапнă вăхăтра ĕçлекен молотилкăсене тата тырă кахмар хăма çуракан завода электроэнерги памалла. Унсăрăн пусне электростанци вăйĕпех колхозниксен пўрчĕсене, колхозăн тата ялти учрежденисен çурчĕсене çутă памалла.

Гидроэлектростанци валли кирлĕ çуртйĕрсене пĕтĕмпех туса çитернĕ, колхозниксен пўртне электричество çутти кĕртме 140 юпа касса хатĕрленĕ. Электростанци валли кирлĕ пулакан оборудовани валли «Электрострой» конторине 30.000 тенкĕ ытла укçа панă.

### *Çĕмĕрлесен чĕнĕвне йышăнчĕç*

КУКЕÇ. Заводская ялĕнчи промысла артелĕ (председателĕ В. Павлов юлташ) Шупашкарти вăрман промысла артелĕпе ăмăртса ĕçлет. Амăртура халĕ Заводскойри артель коллективĕ малта пырать. 1-мĕш кварталти производство планне вăл мартăн 20-мĕшĕ тĕлне 104 процент тултарчĕ. Çак артельри Антоничев, Наумов, Бабушкин, Дарвин стахановецсем кулленхи нормăна 120—130-шер процент тултараççĕ.

Çĕньял-Уйкассинчи «Арслан» промартель те начар мар ĕçлет. Вăл иртнĕ кварталти плана срокчен тултарчĕ, планран ирттерсе 4.000 тенкĕлĕх чăпта çапрĕ.

Çак кунсенче Заводскойрипе Çĕньял-Уйкассинчи артельсенче ĕçлекенсем Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнине ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем тунипе кĕтсе илме чĕнсе каланине сўтсе-явреç. Артельсен коллективĕсем иккĕмĕш кварталти ĕç планĕсене июнĕн 24-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç.

**Г. ПЕТРОВ.**

# Çураки кунран кунах çывхарса килет

## Кашни район тата кашни колхоз акана тухма паян-ыранах хатĕрленсе çитмелле

### Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК. Çураки ĕçĕсем пуçланиччен вăхăт сахал юлчĕ. Çавăнпа та акана хатĕрленес ĕçе пур майсемпе те хăвăртлатмалла. Çакна асра тытса, районри малта пыракан колхозсем кўршĕ районри тата хамăр районри вăрлăх çитмен хăшпĕр колхозсене вăрлăх парса пулăшаççĕ. Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз, çак пиитех те кирлĕ ĕçе хутшăнса, вăрлăх çитмен колхозсене пулăшма 70 центнер вăрлăх уйăрса пачĕ, çав шутран 20 центнерне урăх районри колхозсене панă. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те ытти колхозсене 65 центнер вăрлăх парса пулăшма пулчĕç. 15 центнерне вĕсем çийĕнчех Канаша леçсе пачĕç. Патреккелĕнчи «Осоавиахим» колхоз 35 центнер, Сăрьелĕнчи «Марс» колхоз 45 центнер, «КИМ» колхоз 40 центнер, «Хунав» колхоз 35 центнер вăрлăх параççĕ.

Аслă Таяпари виçĕ колхоза иртнĕ çулсенче ытти колхозсем вăрлăх парса пулăшнăччĕ. Кăçал вара вĕсем хăйсем ытти колхозсене 45 центнер вăрлăх парса пулăшаççĕ. Çав шутран 10 центнерне урăх районри колхозсем валли Канаша леçсе пачĕç.

Çапла вара районри 38 колхоз вăрлăх çитмен колхозсене пулăшма 900 центнер вăрлăх уйăрса хучĕç. Вăл шутран 200 центнерне ытти районри колхозсем валли Заготзерно складне леçсе пачĕç.

**И. ПЕТРОВ.**

* * *

ÇЕРПУ. Çак кунсенче кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Унта колхозниксем вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшасси çинчен сўтсе-яврĕç. Кăшаркассинчи «Пионер» колхоз—240 пăт, Кипекçе ял Советĕнчи «Ĕмĕт» колхоз—230 пăт, «Балтиец» колхоз—220 пăт, Ильич ячĕпе тăракан колхоз—115 пăт, «Красная Армия», «Новая жизнь», Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Кулебакский металлист» колхозсем 100-шер пăт пама йышăннă. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, паянхи куна районĕпе пурĕ 800 центнер ытла Заготзерно пунктне леçсе панă.

**А. ИВАНОВ.**

### Комсомолецсем—колхозăн тĕп ĕçĕсенче

СЕНТЕР. (Хамăр корр.). Юнкă ял Советĕнчи 1905 çулхи революци ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. Елагин юлташ пире колхозри комсомолецсен ĕçĕсемпе паллаштарать:

— Акă, вĕсен ĕçне кунтах курма пулать,—тет вăл, колхоз членĕсем 1944 çулта мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине çырса пынă списока кăтартса.

Эпир комсомолецсен ячĕсем тĕлĕнче чарăнса тăратпăр. С. Гусев 560 ĕçкунĕ тунă. Вăл—комсомол организацийĕн секретарĕ. М. Шмелева комсомолка та 500 ĕçкунĕ тунă, ытти комсомолецсем те пурин те пекех 300—400 ĕçкунĕнчен кая мар. Çак цифрăсем кунти комсомолецсем, колхоз производствинче хастарлăн ĕçленине лайăх кăтартса параççĕ.

Ку колхозра мĕн пурĕ 11 комсомолец. Вĕсем—колхозра пысăк авторитетлă, хастар та ĕçчен çамрăксем. Комсомолецсем пĕр ĕçе те хутшăнмасăр юлмаççĕ. Аçта йывăр та ответлă ĕç—унта комсомолецсем.

Акă, иртнĕ кĕркунне малтанах колхозра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çителĕксĕр пулса пынă. Комсомолецсем, çак ыйтăва çийĕнчех пухура сўтсе-явса, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăйсем çине илнĕ. Вĕсем ĕçе хастарлăн тытăннă та кĕрхи çĕртме планне ытлашшипех тултарнă. Кунта уйрăмăнах А. Гусев тата В. Суворов комсомолецсем тăрăшса ĕçленĕ. Çак ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн ЧАССР Наркомземĕпе ВЛКСМ Обкомĕ Гусева 500 тенкĕ, Суворова 300 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăнах, комсомолецсем çитес çуракине хатĕрленме тытăннă. Вăйлă тырпул туса илес ĕçе татса параканни—вăрлăх. Çакна колхоз çамрăкĕсем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа та вĕсем, чи малтанах, пĕтĕм вăя вăрлăх сортласа тасатас ĕçе мобилизациленĕ. Колхозăн хальхи вăхăтра вăрлăхсем пур культурăсемпе те çителĕклĕ, вĕсене сортланă, кондицие лартнă. Çак ĕçсене комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе тунă.

Тырпул тухăçлăхне ўстерес тĕлĕшпе хĕллехи вăхăтра тумалли тепĕр пысăк ĕç вăл—вырăнти удобренисене пухса уя турттарасси. Ку ĕçе те комсомолецсем хăйсем çине илнĕ. Хĕле кĕнĕренпе вĕсем уя 2000 лав ытла тислĕк кăларнă, 25 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 5 центнер кĕл пухнă.

Колхоз председателĕ коммунист Елагин юлташ комсомолецсемпе яланах çирĕп çыхăну тытать. Вăл комсомолецсен кашни пухăвĕнчех пулать, вĕсене ĕçлĕ кăтартусем парать, вĕрентет, пулăшать. Комсомолецсем те ăна пысăк пулăшу параççĕ.

**А. СОЛОВЬЕВ.**

## Чехословаки Республикин Президенчĕ Эдуард Бенеш господин Мускавра пулни çинчен Совет Союзĕпе Чехословаки пĕлтерни

Мартăн 17-мĕшĕнче Мускава Чехословаки Правительствин членĕсемпе пĕрле Чехословаки Республикин Президенчĕ Эдуард Бенеш доктор килнĕ.

Чехословаки Республикин Президенчĕ Эдуард Бенеш доктор, Премьер-Министр Я. Шрамек тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Я. Масарик СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕпе И. В. Сталинпа тата СССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕпе СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотовпа калаçнă чухне Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха малалла аталантарассипе çыхăнса тăракан ыйтусене сўтсе-явнă. Сўтсе-явнă ыйтусен никĕсĕнче 1943 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче СССР-па Чехословаки пĕр-пĕрипе туслă пурăнмалли, пĕр-пĕрне пулăшмалли тата вăрçă хыççăн пĕрлешсе ĕçлемелли çинчен калакан договор пулнă. Калаçусенче тата çаксем пулнă: Чехословакин СССР-ти Посолĕ Зд. Фирлингер господин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Совет Союзĕн Чехословакири Посолĕ В. А. Зорин.

Чехословаки территорине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларса, вăл территори çинче Чехословаки Правительствин влаçне туса хурассипе, Чехословаки çарне йышлатса çирĕплетес тĕлĕшпе Совет Союзĕ Чехословакие пулăшассипе, çавăн пекех Хĕрлĕ Çар Чехословаки çĕрне ирĕке кăларнăçемĕн унти халăха пулăшассипе çыхăнса тăракан ыйтусене сўтсе-явнă.

Калаçусем туслă та ырă кăмăллă условисенче пулса иртнĕ.

Мартăн 31-мĕшĕнче Эдуард Бенеш доктор тата унпа пĕрле килнĕ çынсем Чехословакие тухса кайнă.

## Чехословаки республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин Мускавран тухса кайни

Мартăн 31-мĕшĕнче Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин хăйĕн арăмĕпе пĕрле Мускавран тухса кайнă. Президентпа пĕрле çаксем тухса кайнă: Чехословакин Премьер-Министрĕ Я. Шрамек господин, Словакин Наци Совечĕн Председателĕ В. Шрома господин, Чехословакин СССР-ти Посолĕ Зд. Фирлингер господин, Я. Странский, Я. Бечко, В. Майер, Я. Лихнер, Я. Смутный, Г. Готвальд, Зд. Неедлы профессор, В. Носек господин тата ыттисем те.

Эд. Бенеш господинпа пĕрле Совет Союзĕн Чехословаки Республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ В. А. Зорин тухса кайнă.

Чехословаки Республикин Президентне Эд. Бенеш господина тата унпа пĕрле каякансене ăсатма вокзала çаксем пынă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Наркоминделăн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ А. А. Лаврищев, Мускав хула Совечĕн Председатель Заместителĕ М. А. Яснов, Мускав хулин коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант тата СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин.

Вокзалра тата çаксем пулнă: Франци Республикин Посолĕ Ж. Катру господин, Польша Республикин Посолĕ З. Модзелевский господин, Норвеги Посолĕ Р. Андворд господин, Нидерланди Посолĕ К. Ван Бругель Дуглас господин, Швеци Посланникĕ С. Седерблюм господин, Югослави Ĕçĕсен Поверенныйĕ Р. Николевич господин, Иран Посольствин Советникĕ А. Этесами господин, Франци Çар Миссийĕн Начальникĕ Э. Пети генерал, Чехословаки Посольствипе Чехословаки Çар Миссийĕн членĕсем, совет пичечĕпе ют çĕршыв пичечĕн представителĕсем.

Совет чиккине çитиччен Президента СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри Çыхăну Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор ăсатса яраççĕ.

Ăсатнă чухне хисеплĕ хурал тăратнă та, та Чехословакипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă. Вокзала Чехословакипе Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ.

### *Чехословаки Республикин Президенчĕ Бенеш господин каланă сăмах*

Мускавран тухса каяс умĕн Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш доктор вокзалра микрофон умĕнче çапла каланă:

«1943 çулхи декабрьте эпĕ Мускавран сирĕн хушăрта татах та пулăп-ха тесе шанса тухса кайрăм. Çакна эпĕ пирĕн договор хывнă çул пирĕн пулас политикăшăн, Чехословакин пуласлăхĕшĕн пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулнине шанса каларăм. Вăл çулпа пур славян халăхĕсем те пымалла, вăл çул пирĕн ирĕклĕхĕн, пирĕн халăхсен пулас хăрушсăрлăхĕн шанчăкĕ пулса тăрать.

Ку хутĕнче те манăн Мускав урлă вырттакан çул символлă çул пулса тăрать. Мĕншĕн тесен паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç тăшманĕнчен ирĕке кăларакан тăван çĕршыва каймалли çул çинче Мускав юлашки хут чарăнмалли хула пулса тăрать.

Эсир пире пулăшнăшăн сире пурне те тав тăватăп, малашне те эпир сирĕнпе пирĕн халăхсен телейлĕ пуласлăхĕ патне сирĕнпе пĕрле, хамăрăн пиччепе пĕрле каяссине шанса тăратăп».

### „Новый путь“ колхоз çуракине хатĕрленмест

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. «Новый путь» колхоз çак вăхăта çитсе те вăрлăх фондне хывса çитермен. Колхозăн 60 центнер сĕлĕ вăрлăхĕ çитмест, çавăн пекех тулăпа урпа вăрлăхĕсем те çителĕксĕр, çĕрулми вăрлăхĕ вара пачах çук. Вăрлăхсене сортласа тасатман. Пур пек урпа вăрлăхĕ те акма юрăхсăр, шăнса хытса ларнă. Ялхуçалăх машинисем юсавсăр. Плугсем халĕ те кĕрхи çĕртме сухаланă çĕрте е урамсенче юр айĕнче лараççĕ.

Лашасем пурте начар. Вĕсенчен нумайĕшĕсем кĕçĕллĕ. Кунта ветеринари фельдшерĕ те пур. Анчах вăл лашасене сыватма тăрăшмасть. Иртнĕ çулта колхозра пĕр лаша кăна кĕçĕллĕ пулнă. Ана çийĕнчех сыватман тата ытти сывă лашасенчен уйăрман пирки, кĕçĕ вăйлăн сарăлса кайнă. Колхоз правленийĕ çакăншăн ветфельдшера тиьĕçлĕ ответ тыттарас вырăнне, кашни уйăхра 60-шар ĕçкунĕ тўлесе пурăнă. Колхоз председателĕ Лысов колхозăн тăрăшмасть, яланах ĕçсе çўрет.

«Новый путь» колхозри партипе комсомол организацийĕсем колхозăн çитменлĕхĕсене, паллах, кураççĕ, анчах ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Колхоз правленийĕ çулталăкри отчет тăвас умĕн, хăйĕн айăпĕсене пытарса хăварас тесе, «актива» аванс шучĕпе 385 пăт тырă валеçсе панă. Çапла вара отчетра колхоз правленийĕн ĕçне вăтам тесе хак панă. Правлени составĕнче малтанхи çынсемех юлнă. Районри организацисем çакна курман, нимĕнле мера та йышăнман.

«Новый путь» колхоз çак кунсенчех хăйĕн ĕçне тўрлетмесен, паллах, çуракине кирлĕ пек туса ирттереймест. Колхозри пысăк çитменлĕхсене халех тўрлетмелле, колхозниксемпе колхозницăсене çуракине хатĕрленес ĕçе мобилизацилемелле.

**А. ШИНЖАЕВ.**

### Тухăçлă кок-сагызшăн

Иртнĕ çулта Елчĕк районĕнчи Курнавăшри «Автогигант» колхоз кашни гектартан 18,3 центнер кок-сагыз тымарĕ, 36 килограмм вăрлăх туса илчĕ. Ку енĕпе районри «Путь Ленина», «Пахарь», «КИМ» тата ытти хăшпĕр колхозсем те аван ĕçлерĕç, фронтпа Тăван çĕршыва питĕ кирлĕ техникăллă культура туса пачĕç.

Асăннă колхозсем пысăк тухăçлă коксагыз туса илес тесе, чăн малтанах, хĕллехи агротехника мероприятийĕсене лайăх пурнăçларĕç. Иртнĕ çулхи опыта шута илсе, çав колхозсем кок-сагыз агротехникине кăçал та тимлĕн пурнăçласа пыраççĕ.

Çапла «Автогигант» колхоз 9 гектар кок-сагыз участокĕ çинче юр тытса хăварчĕ, кок-сагыза çуркунне апатлантарма 60-шар центнер кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хучĕ. Кĕркунне акмалли 10 гектар çине колхоз 1.200 лав тислĕк кăларчĕ. Çураки пĕтсенех, ку участок çинче тислĕк салатса çĕртме тăваççĕ.

**М. ЕГОРОВ.**

### Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварма тăрăшнă çĕрте

СОВЕТСКОЕ. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхса ўстерес тата çитĕннĕ выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн колхозниксене хушса тўлесси çинчен йышăннă постановлени выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатса пыма пулăшрĕ. Выльăхсем вилесси, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, районра кăçал нумай чакрĕ.

Мăн Чурашри «Прогресс» колхоз ферминчи сурăхсем кăçал 109 пўтек туса панă, вĕсем пурте таса та сывă ўсеççĕ. Тушкассинчи Володарский ячĕпе тăракан колхозра кăçал çуралнă 106 пўтекрен пĕри те вилмен. Çавăн пекех Асламас ял Советĕнчи «Коминтерн», «Искра», Чемей ял Советĕнчи «Сеятель», «Страж революции», Уйкас Апашри «Свобода» колхозсенче те кăçал çуралнă пăрусемпе путексем. сысна çурисем тĕрĕс-тĕкĕл ўсеççĕ.

Фермăсенче ĕçлекенсем, çуралакан выльăхсене лайăх кĕтсе илнипе пĕрлех, вĕсене таса та сывă ўстерме тăрăшаççĕ.

**Як. СИГАЙ.**

### Колхозри агитколлектив ĕçлемест

Çураки çывхарса килет. Анчах та Муркаш районĕнчи Тойкилт ял Советĕнчи колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный комитечĕн «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановленине колхозниксемпе колхозницăсене ку таранччен те ăнлантарса паман. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ В. Чернышев юлташ акитколлектива ертсе пымасть. Колхозсенче стена хаçачĕсем тухмаççĕ.

Пирĕн колхозсем иртнĕ çулта тырă лайăх туса илнĕ пулсан, кăçал татах та лайăххах туса илме тăрăшмалла. Çавăнпа та ку ыйту тавра акитколлективăн масса хушшинчи ĕçе вăйлатмалла.

**М. ИВАНОВ.**

### *Стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ*

СЕНТЕРВАРРИ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕн парткабинетĕнче хулари предприятисемпе учрежденисенчи стена хаçат редакторĕсемпе редколлеги членĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура районри хаçатăн ответлă редакторĕ Ф. Ильин юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче большевикла пичет мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен тата хальхи вăхăтра предприятисемпе учрежденисенчи стена хаçачĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ. Çавăн пекех вăл материалсем мĕнле çырмаллине, вĕсене пухса мĕнле усă курмаллине ăнлантарса пачĕ.

Канашлура пулнă çынсем доклад тăрăх нумай ыйтусем пачĕç. Малашне стена хаçачĕсене йĕркеллĕн кăларса тăма пулчĕç.

**И. ОСИПОВ.**

### Лашасене чунсăррăн пăхаççĕ

ÇЕРПУ. Лашасене пăхса усрасси тата вĕсен йышне ўстересси—пысăк та ответлă ĕç. Анчах Хыркассинчи «Кульмет» колхозра лашасене чунсăррăн пăхаççĕ. Конюхсем лашасене типĕ улăм кăна параççĕ, талăкра пĕрре ушкăнĕпе çырмана хăваласа анса шăвараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ку колхозра пĕтĕм лаша шутĕнчен 50 проценчĕ ырханланса кайнă, 9 лаша хăмăт тивнипе вăхăтлăха стройран тухнă. Çавăн пекех тата 12 пĕтĕ кĕсререн 10-шĕ хăм пăрахнă. Анчах айăплисене ответ тыттарман.

**А. ИВАНОВ.**

## Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Руртан çурçĕртерехре малалла куçса пынă, вĕсем куçса пынин хăвăртлăхĕ малтанхи пекех. Хăшпĕр танковăй отрядсем мартăн 31-мĕшĕнче 24 километр ытла малалла кайнă. Боркенран çурçĕртерехре союзниксем Штадтлон хулине йышăннă тата вăл хуларан чылай иртсе кайнă.

Союзниксен танковăй отрячĕсем Падерборн хулин кăнтăр хĕрринче çапăçаççĕ, вĕсем тăшман пехоти тата çĕр ăшне чавса лартнă танкĕсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пыраççĕ.

Унтан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен танковăй чаçĕсем, 29 километр куçса, Варбург хули патне çитнĕ. Кассель хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Бергхейм хулине тата Эдер шывĕ çинчи пĕвене тытса илнĕ. Çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан танковăй отрядсем 56 километр малалла куçнă, Кассель хулинчен 8 километр кăнтăртарахра ларакан пĕр пункт патне çитнĕ.

Союзниксен Лаутербарх хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре 37 километр куçнă танковăй отрячĕсем Герсфельд хулинчен кăнтăртарахра ларакан пĕр пункт патне çитнĕ. Майн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре, Ашаффенбург хулинчен кăнтăртарахра союзниксем 10 километра яхăн малалла кайнă. Танковăй отрядсем, хĕвелтухăç еннелле 40 километра çити куçса, Бюрцбург хулинчен 10 километрта ларакан пĕр пункт патне çитнĕ, вăл пункт Рейнран 96 километрта ларать.

Шпейер хулинчен кăнтăртарахра союзниксем 16 километр тăршшĕ фронтра Рейн шывĕ урлă каçнă. Вăл отрядсем Гокенхеймра Маннгейм районĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçса пыракан союзниксен çарĕсемпе пĕрлешнĕ.

Мартăн 30-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 19.166 çынна тыткăна илнĕ.

## Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН. мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Францири стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çумĕнчи Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 1.300 ытла йывăр бомбардировщикĕ, 850 истребитель хўтĕлесе пынипе, паян Цейц хулинчи синтетически горючи заводне, Галле хулинчи чугун çул депоне тата Брауншвейгри промышленноçпа чугун çул объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Берлинпа Эрфурта тата тăшманăн аэродромĕсемпе ытти объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи вăйĕсен штабĕ çумĕнчи Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи авиаци шутне кĕрекен йывăр бомбардировщиксем мартăн 31-мĕшĕнче кăнтăрла Венăпа Грац хулинчи чугун çул узелĕсене тапăннă.

### «ПОЛЬПРЕСС» АГЕНТСТВИ ПĔЛТЕРНИ

ВАРШАВА, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Польпресс» агентстви çапла пĕлтерет:

Польшăн Варшаври Вăхăтлăх Правительствин министрсен совечĕ 1945 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче пулнă ларура, Польшăн Вăхăтлăх Правительствине Югослави Правительстви йышăннине ырласа, çапла йышăннă:

Польшăпа Югослави хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа ярса, пĕр-пĕрин патне посланниксем ярас, тенĕ.

### *Ют çĕршыв хроники*

▲ Парижри консультаци ассамблейи нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче туртса илнĕ пурлăха хуçисене каялла таварса парас тĕлĕшпе правительство йышăннă ĕçсене ырланă.

▲ Çак кунсенче Польшăра сывлăшри пирвайхи çул уçăлмалла. Вăл Варшава, Лодзь, Краков тата Люблин хулисене çыхăнтармалла.

▲ Ирĕке кăларнă Силезири техника училищисенче вĕрентме пуçланă. Вĕренекенсен хисепĕ 2.000 çынтан иртет. Вăрçăччен вăл училищĕсенче 960 çын кăна вĕреннĕ пулнă. (ТАСС).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00557 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000